...чаш сул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943 ЯНВАРЬ 19 ЫТЛАРИКУН 14(6251) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I.

Пирĕн войскăсем Воронежран кăнтăртарахра ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ

Çак кунсенче Воронежран кăнтăртарахра вырнаçса тăракан пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступлени тума тытăннă.

Наступление виçĕ еннелле: СЕЛЯВНОЕ тата ЩУЧЬЕ районĕсенчен—кăнтăр-хĕвеланăçнелле, КАНТЕМИРОВКА районĕнчен — çурçĕр-хĕвеланăç еннелле тата хĕвеланăç еннелле тума тытăнчă. Противникăн вăйлăн тĕреклетнĕ оборонине СЕЛЯВНОЕ районĕнче — 45 километр тăршшĕ, ЩУЧЬЕ районĕнче 50 километр тăршшĕ тата КАНТЕМИРОВКА районĕнче 60 километр тăршшĕ татса кĕрсе, пирĕн войскăсем, виçĕ кун хушши хĕрӳллĕн çапăçса тата противник хирĕç тăнине сирсе пырса, 50—90 километр малалла кайнă.

Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 600 пункта ытла, вăл шутрах РОССОШЬ хулипе чугунçул узелне, ОЛЬХОВАТКА, МИТРОФАНОВКА, ПУХОВО ятлă район центрĕсемпе чугунçул станцисене, РЕПЬЕВКА, КРАСНОЕ, РОВЕНЬКИ, МАРКОВКА, КАМЕНКА ятлă район центрĕсене, МЕЛОГОРЬЕ, РЫБАЛЬЧИНО, СОТНИЦКОЕ ятлă чугунçул станцисене йышăнса илнĕ.

Пирĕн войскăсем наступлени тунă вăхăтра противникăн 9 пехотнăй дивизине, вĕсен шутĕнче нимĕçсен 3 дивизине тата венгерсен 6 дивизине, çĕмĕрсе тăкнă.

Виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче противникăн 17.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех, туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—75, тĕрлĕ калибрлă орудисем—800, минометсем—493, пулеметсем—1.200, винтовкăсем—14.000, автомашинăсем—520, тракторсем—130, лавсем—672, лашасем—700, радиостанцисем—21, снарядсем, —350.000, патронсем—5 миллион ытла, боеприпассемпе тумтирсен тата продовольстви склачĕсем 70 тытса илнĕ. Трофейăсене шута илес ĕç малалла пырать.

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксем—135, орудисем—210, самолетсем—17.

Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 15.000 çити салтакпа офицер пĕтнĕ.

Противникăн оборонине татса кĕрес ĕçе генерал-лейтенант Ф. И. ГОЛИКОВ юлташ ертсе пыракан Воронеж фрончĕн тата генерал-полковник Н. Ф. ВАТУТИН юлташ ертсе пыракан Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн вăйĕсем пурнăçа кĕртнĕ. Çак икĕ фронтăн çапăçăвĕсене Верховнăй Главнокомандованин Ставкин представителĕ генерал-полковник А. М. ВАСИЛЕВСКИЙ çыхăнтарса пынă.

Çапăçусенче генерал-майор А. С. МОСКАЛЕНКО юлташăн, генерал-лейтенант Ф. М. ХАРИТОНОВ юлташăн, генерал-майор Т. М. ЗЫКОВ юлташăн войскисем, генерал-майор П. С. РЫБАЛКО юлташăн танковăй соединенийĕсем тата генерал-лейтенант Ф. Ф. СОКОЛОВ юлташăн кавалери соединенийĕсем уйрăмăнах палăрнă.

II.

Сталинград районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен фашистла войскисене пĕтерсе тăкас ĕç вĕçленсе пырать

«Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем ултă эрне хушши тунă наступленин итогĕсенче» Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа наступлени туса пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çар кĕске срокрах питех те йывăр операцие ăнăçлăн туса иртнерĕ, Сталинград районĕнче противникăн 22 дивизине йĕри-таврах хупăрласа илнĕ.

Тăшманăн хупăрласа илнĕ войскисем хушшинче — 3 танковăй, 3 моторизованнăй, 15 пехотнăй тата пĕр кавалери дивизийĕ. Кунсăр пуçне, нимĕç çарĕн главнăй командованийĕн резервĕнчи 3 артиллерийски полка, 4 зенитнăй полка, пĕр минометнăй полка, 4 сапернăй уйрăм батальонсене хупăрласа илнĕ пулнă.

Пирĕн войскăсем Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени тума пуçланă тĕле Сталинград патĕнче кĕрешекен нимĕç войскисен личнăй составĕ, армисемпе корпуссен тылĕсене те шута илсе, 200 — 220 пин çынна çити пулнă. 1942 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа çак войскăсене йĕри-таврах хупăрласа илнĕ.

Нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче йĕри-таврах хупăрласа иличченех ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар нимĕçсен 44-мĕш, 376-мĕш тата 384-мĕш дивизийĕсене пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă, вăл дивизисен юлашкийĕсем халĕ тăшманăн хупăрласа илнĕ войскисемпе пĕрле тăраççĕ. Юлашки эрнесенче пирĕн войскăсем сывлăшран тăтăшах бомбăсем пăрахса, артиллерирен персе тата çĕр çинчи войскăсем атакăсем тунине пула противникăн хупăрласа илнĕ группировкинчи салтаксемпе офицерсене питех те нумай пĕтерсе тăкнă.

Кунсăр пуçне, продовольстви турттарса пымалли çулсăр тăрса юлнине пула, нимĕçсен çавăрса илнĕ фашистла войскисем питех те йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ. Нимĕçсен хупăрласа илнĕ вырăнти салтакĕсем талăкра пĕтĕмпе те 100—150 грамм кăна çăкăр илеççĕ. Хупăрласа илнĕ гитлерла чăçсенче чылайĕшĕнче вилнĕ лашасене те çисе янă ĕнтĕ. Германи командованийĕ транспорт авиацине усă курса хăйĕн войскисене продовольстви пырса пама хăтланнисем путланса ларчĕç. Ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 10-мĕшне çити вăхăтра Сталинград патĕнче 600 ытла транспортнăй самолета персе ӳкернĕ. Выçă пурăнса начарланса кайнине пула, салтаксем хушшинче еркен чирсем сарăлаççĕ. Хирти госпитальсем аманнисемпе чирлисене тахçанах ĕнтĕ пурне те вырнаçтарма пултараймаççĕ. Çав вăхăтрах Сталинград патĕнчи нимĕç салтакĕсен хĕллехи тумтирсем çук. Тăм илнипе вилнисен хисепĕ кашни кунах ӳссе пырать. Тыткăна лекнисем кăтартса панă тăрăх, начарланса кайнипе тата тăм илнипе кăна хирсенче кулленех 400—500 салтак вилет, пĕтĕмпе вара Сталинград патĕнче хупăрласа илнĕ нимĕç войскисем кулленех 1.500 салтакран кая мар çухатаççĕ.

Çаксене пурне те пула, нимĕçсен фашистла войскисем хăйсене Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ вăхăтранпа çынсем енĕпе пысăк çухатусем тӳснĕ. Хальхи вăхăтра нимĕçсен хупăрласа илнĕ фашистла войскисен личнăй составĕ 70—80 пин çынран ытла мар.

Совет Командованийĕ — Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕн Ставкин представителĕ артиллерин генерал-полковникĕ Н. Н. ВОРОНОВ тата Дон фронтĕнчи войскăсен командующийĕ генерал-лейтенант К. К. РОКОССОВСКИЙ, усăсăр юн тăкас мар тесе, 1943 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче Германин Сталинград патĕнче хупăрласа илнĕ войскисен командованине тата мĕнпур офицерсемпе рядовой состава çакăн пек ультиматум панă:

«Германин 6-мĕш армин командующине генерал-полковник Паулюса е унăн заместительне тата Германин Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ войскисен мĕнпур офицерĕсемпе рядовой составне.

Германин 6-мĕш армине, 4-мĕш танковăй армин соединийĕсемпе вĕсене вăйлатма хушса панă чăçсене 1942 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

Хĕрлĕ Çарăн чăçĕсем Германи войскисен çав группине тачă ункăпа çавăрса илнĕ. Германи войскисем кăнтăртан тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчен наступлени тунипе сирĕн войскăсене çăлса хăварас шанчăксем пурнăçа кĕреймерĕç: Германин сире пулăшма васкакан войскисене Хĕрлĕ Çарăн чăçĕсем çапса аркатрĕç, çав войскăсен чăçĕсем Ростов патнелле чакса пыраççĕ.

Германин сирĕн пата продовольствин, боеприпассемпе горючин выçă нормине турттаракан транспортнăй авиацийĕн, Хĕрлĕ Çар малалла ăнăçлăн та хăвăрттăн куçса пынă пирки, аэродромсене час-часах улăштарма лекет тата çавăрса илнĕ войскăсем патне инçетрен вĕçсе килме тивет. Çакăнпа пĕрлех Германин транспортнăй авиацийĕ, вырăссен авиацийĕ кĕрешнине пула, самолетсемпе экипажсем тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк çухатусем тӳсет. Çавăрса илнĕ войскăсене вăл ĕнтĕ, тĕрĕссипе, пулăшма пултараймасть.

Сирĕн çавăрса илнĕ войскăсен лару-тăрăвĕ йывăр. Вĕсем выçăпа, чирсемпе тата сивĕпе асапланаççĕ. Вырăссен хаяр хĕлĕ тин кăна пуçланать-ха. Вăйлă шартлама сивĕсем, сивĕ çилсемпе тăвăлсем—умра-ха, сирĕн салтаксене вара хĕллехи тумтирсем паман, санитари тĕлĕшпе вĕсем йывăр условисенче пурăнаççĕ.

Эсир, çавăрса илнĕ войскăсен командующийĕ пулса тăрса, çавăн пекех тата çавăрса илнĕ войскăсен мĕнпур офицерĕсем, çакна лайăх ăнланатăр: çавăрса илнĕ ункăна татса тухма сирĕн тĕрĕссипе нимĕнле майсем те çук. Сирĕн лару-тăру шанчăксăр тата эсир малашне хирĕç тăни нимĕнле усă та кӳмест.

Сирĕншĕн хăтăлма çук обстановка пулса тăнине кура, усăсăр юн тăкас мар тесе, сире парăнмалли çакăн пек условисене йышăнма сĕнетпĕр:

1) Германин çавăрса илнĕ мĕнпур войскисен, Эсир тата Сирĕн штаб пуç пулса тăракансем, хирĕç тăма пăрахмалла;

2) Сирĕн мĕнпур личнăй составa, хĕçпăшалсене, мĕнпур боевой техникăпа çар пурлăхĕсене юсавлипех пирĕн алла организованно памалла.

Хирĕç тăма пăрахнă офицерсемпе салтаксене пурне те эпир чĕрĕ тата хăрушсăрлăхра хăварма пулатпăр, вăрçă пĕтнĕ хыççăн вара Германие е тыткăна лекнĕ çар çыннисем хăйсем кăмăллана тăрăх ытти кирек мĕнле çĕршыва та тавăрма пулатпăр.

Парăннă войскăсен мĕнпур личнăй составĕн çар формине, уйрăмлăх знакĕсемпе орденсене, харпăрхăйĕн япалисене, хаклă япалисене сыхласа хăваратпăр, офицерсен высший составне—хĕçсем те сыхласа хăварма ирĕк паратпăр.

Мĕнпур парăннă офицерсене, унтер-офицерсемпе салтаксене çийĕнчех йĕркеллĕн апатлантарма пуçлатпăр.

Аманнисене, чирлисене тата тăм илсе янисене пурне те медицина тĕлĕшпе пулăшу паратпăр.

Сирĕн ответа 1943 çулхи январĕн 9-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 10 сехет те 00 минутăра эсир хăвăр уйăрнă представитель урлă çырупа кĕтетпĕр. Эсир хăвăр уйăрнă представителĕн раз'езд Конный—Котлубаж станцийĕ хушшинчи çулпа шурă флаг çакнă çăмăл автомашинăпа пымалла. Сирĕн представителе вырăссен çак ĕçе шаннă командирĕсем «Б» районĕнче 564-мĕш раз'ездран 0,5 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре 1943 çулхи январĕн 9-мĕшĕнче 10 сехет те 00 минутăра кĕтсе илеççĕ.

Эпир сире парăнма сĕннине эсир сирсе ярас пулсан, çакна асăрхаттаратпăр: Хĕрлĕ Çарăн тата Хĕрлĕ Сывлăш Флочĕн войскисен малашне ĕçе Германин çавăрса илнĕ войскисене пĕтерсе тăкассишĕн туса пымалла пулать, вĕсене пĕтерсе тăктарнишĕн эсир ответ тытатăр.

Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандовани Ставкин представителĕ артиллерин генерал-полковникĕ ВОРОНОВ.

Дон фронтĕнчи войскăсен командующийĕ генерал-лейтенант РОКОССОВСКИЙ».

Нимĕçсен Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ фашистла войскисен командованийĕ совет командованийĕн ультиматумне сирсе янă.

Çавна пула январĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен Сталинград районĕнче çавăрса илнĕ фашистла войскисене хирĕç генеральнăй атака пуçласа янă. Çичĕ кун хушшинчи хĕрӳллĕ çапăçусенче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисем тавра ункăна хĕссе пырса, уйрăм вырăнсенче 20—35 километр малалла куçнă тата оборонăн çирĕплетнĕ паха узелĕсене— —МАРИНОВКА, АТАМАНСКИЙ, ВОРОШИЛОВ ЯЧĔПЕ ТАРАКАН ЛАГЕРЬ, КАРПОВКА, ЖИРНОКЛЕЕВКА, ГОСПИТОМНИК, СИНЕОКОВСКИЙ, НОВЫЙ РОГАЧИК, СТАРЫЙ РОГАЧИК, ПЕСЧАНЫЙ КАРЬЕР, БЕРЕСЛАВСКИЙ, СКЛЯРОВ, РАКОТИНО, КРАВЦОВ, ЦЫБЕНКО, ЕЛКИ, АЛЕКСЕЕВКА, ПИТОМНИК, ДУБИНИН, МАЛАЯ РОССОШКА, ЗАПАДНОВКА, БОРОДИН, ПĔРРЕМĔШ НОМЕРЛĔ СОВХОЗ, БАБУРКИН, НОВО-АЛЕКСЕЕВСКИЙ, ДМИТРИЕВКА, ПОЛТАВСКИЙ, ОТОРВАНОВКА, СОЛОВЬЕВ ятлă узелсене тата БАСАРГИНО, КАРПОВСКАЯ, ПРУДБОЙ ятлă чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Пирĕн артиллерипе минометсем 7 кун хушшинчи наступленире çирĕплетнĕ 1.526 узелпа блиндажа, çирĕп туса хатĕрленĕ 76 наблюдательнăй пункта ишĕлтернĕ тата противникăн артиллерипе минометсен 317 батарейине пĕтерсе тăкнă, пусарса лартнă.

565 квадратнăй километрлă территорие противникран тасатнă.

Январĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 16-мĕшне çитиччен наступлени туса пынă хушăра пирĕн войскăсем нимĕçсен 6.896 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—371, танксем—514, тĕрлĕ калибрлă орудисем—941, минометсем—470, вĕсенчен ултă кĕпçеллĕ минометсем—50, пулеметсем—1.950, винтовкăсем—16.308, автомашинăсем—15.551, мотоциклсем — 1.387, тягачсемпе транспортсем — 67, çар грузĕсем тиенĕ лавсем—1.408, радиостанцисем—54, бронепоездсем—3, паровозсем—10, вагонсем—100, боеприпассемпе хĕçпăшал склачĕсем—63, çавăн пекех снарядсемпе авиабомбăсем, минăсемпе гранатăсем, винтовка патронĕсемпе ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем—75, танксем—174, тĕрлĕ калибрлă орудисем—416, минометсем—140, пулеметсем—769, автомашинăсем—414, тĕрлĕ складсем—9.

Çичĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 25.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ.

Противникăн оборонине татса кĕрес ĕçе Дон фрончĕн вăйĕсем генерал-полковник К. К. РОКОССОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе пурнăçа кĕртнĕ. Артиллери наступленине организацилес ĕçе Верховнăй Главнокомандовани Ставкин представителĕ артиллери генерал-полковникĕ Н. Н. ВОРОНОВ юлташ ертсе пынă.

Çапăçусенче генерал-майор И. М. ЧИСТЯКОВ юлташăн, генерал-майор Ф. И. ТОЛБУХИН юлташăн, генерал-лейтенант П. И. БАТОВ юлташăн, генерал-лейтенант М. С. ШУМИЛОВ юлташăн, генерал-майор И. В. ГАЛАНИН юлташăн, генерал-лейтенант В. И. ЧУЙКОВ юлташăн, генерал-майор А. С. ЖАДОВ юлташăн войскисем уйрăмах палăрнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен район, хула, поселок тата ял Совечĕсен суйлавĕсене тепĕр срока хăварасси çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен район, хула, поселок тата ял Совечĕсен суйлавĕсене 1943 çулхи декабрьччен хăварас тата вăл Советсен полномочийĕсене çав сроклăхах тăсас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи январĕн 17-мĕшĕ.

I.

Пирĕн войскăсем Миллерово, Алексеевка, Коротояк, Подгорное, Курсавка ятлă пунктсене йышăнса илнĕ

Январĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн МИЛЛЕРОВО хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ.

Нимĕçсен хулари гарнизонĕ çавăрса илнĕ ункăран тухма хăтланнă, анчах ăна пирĕн войскăсем пĕтĕмпе тенĕ пекех вĕлерсе пĕтернĕ. Йышлă трофейăсем тытса илнĕ, çав трофейăсем хушшинче 15 самолет, тĕрлĕ çар пурлăхĕсен склачĕсем тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ тиенĕ поездсем пур.

ВОРОНЕЖРАН кăнтăралларахра наступлени туса пыракан пирĕн войскăсем АЛЕКСЕЕВКА хулипе пысăк чугунçул станцине, КОРОТОЯК хулине тата ПОДГОРНОЕ ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тытса илнĕ.

ÇУРÇĔР КАВКАЗРА пирĕн войскăсем татăклăн атака тунă хыççăн КУРСАВКА ятлă район центрĕпе пысăк чугунçул станцине тытса илнĕ.

II.

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем тытса илнĕ трофейăсем

КАВКАЗ ЛЕШЪЕНЧИ. фронтăн çурçĕр группинчи войскисен чăçĕсем (Кавказ лешъенчи фронта арми генералĕ И. В. ТЮЛЕНЕВ юлташ ертсе пырать) ÇУРÇĔР КАВКАЗРА нимĕçсен оккупанчĕсемпе çапăçса 1942-мĕш çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи январĕн 16-мĕшне çитиччен çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: самолетсем — 35, танксем — 314, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 372, минометсем — 422, противотанковăй пăшалсем — 396, пулеметсем—602, винтовкăсем — 10 пин ытла, снарядсем — 385 пин, авиабомбăсем — 300 пин, винтовка патронĕсем — 3 миллиона яхăн, автомашинăсем — 2.338, мотоциклсем — 460, радиостанцисем — 28, паровозсем — 8, товарнăй вагонсем — 1.020, вĕсен шутĕнче снарядсем тиенĕ 26 вагон тата автомашинăсемпе танксен запаслă чаçĕсене тиенĕ 48 вагон, чугунçул çинчи платформăсем — 550, чугунçул çинчи цистернăсем—70, пассажирски вагонсем — 80, юр тасатакан машинăсем — 27, боеприпассен, хĕçпăшалсен тата продовольстви склачĕсем — 70.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I.

Пирĕн войскăсем Ладога кӳллинчен кăнтăртарахра ăнăçлă наступлени туни тата Ленинград блокадине татса кĕни

Çак кунсенче Ладога кӳллинчен кăнтăртарахра вырнаçса тăракан пирĕн войскăсем нимĕçсен Ленинграда хупăрласа тăракан фашистла войскисене хирĕç наступлени тума тытăннă.

Пирĕн войскăсен задачи — противникăн оборонине çĕмĕрсе тăкасси тата, çапла майпа, Ленинград блокадине татса кĕресси пулнă. Çак обстоятельствăна асра тытас пулать: Ленинграда хупăрласа тăнă нумай уйăхсем хушшинче нимĕçсем хула патĕнчи хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ хăватлă район туса хунă, унта вĕсем бетонран тата ытти япаласенчен нумай вăхăтлăха пыракан сооруженисен вăйлă системине, танксене тата пехотăна çӳреме кансĕрлекен чăрмавсем нумай туса тултарнă.

Пирĕн войскăсем икĕ енчен: Нева юханшывĕн хĕвеланăç çыранĕнчен, Шлиссельбургран кăнтăр-хĕвеланăçнерехрен, тата хĕвелтухăç енчен— Ладога кӳллинчен кăнтăртарахри районран наступлени туса пынă.

Противникăн нумай вăхăтлăха тĕреклетнĕ полосине татса 14 километра çити шалалла кĕрсе кайса тата Нева юханшывĕ урлă каçса, пирĕн войскăсем 7 кун хушши пынă хĕрӳллĕ çапăçусенче, противник питех те вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, ШЛИССЕЛЬБУРГ хулине, МАРЬИНО, МОСКОВСКАЯ ДУБРОВКА, ЛИПКА ятлă тĕреклетнĕ пысăк пунктсене, 1, 2, 3, 4, 5, 6, 7 тата 8-мĕш рабочи поселоксене, СИНЯВИНО станцине тата ПОДГОРНАЯ станцине тытса илнĕ.

Çапла вара, çичĕ кун хушшинчи çапăçусем хыççăн, Волхов тата Ленинград фрончĕсен войскисем январĕн 18-мĕшĕнче пĕрлешнĕ те Ленинград блокадине татса тухнă.

Пирĕн войскăсем наступлени тунă вăхăтра нимĕçсен 227, 96, 170, 61 — мĕш пехотнăй дивизийĕсене, 207-мĕш дивизин 374-мĕш пехотнăй полкне, 5-мĕш горнострелковăй дивизин 85 пехотнăй полкне, 223-мĕш мотоотрядне тата 1-мĕш пехотнăй дивизин пĕр пайне çĕмĕрсе тăкнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем 1.261 салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

Çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн артиллерипе минометсенчен персе противникăн 470 тĕреклетнĕ узелĕпе блиндажне, лайăх туса хатĕрленĕ 25 наблюдательнăй пунктне аркатса тăкнă, артиллерипе минометсен 172 батарейине пĕтерсе тăкнă е пусарса лартнă.

Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: орудисем — 222, минометсем — 178, пулеметсем — 512, винтовкăсем — 5.020, ултă стволлă минометсем — 4, танксем — 26, бронемашинăсем — 9, ручной гранатăсем — 17.300, рацисем — 72, патронсем — 2.200.000, снарядсем — 22.000, минăсем — 36.000, автомашинăсем — 150, лашасем — 1.050, лавсем — 880, тĕрлĕ складсем — 40.

Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 13.000 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

Противникăн оборона линине татса кĕрес ĕçе генерал-полковник Л. А. ГОВОРОВ ертсе пыракан Ленинград фронтĕнчи вăйсен пĕр пайĕ тата арми генералĕ К. А. МЕРЕЦКОВ ертсе пыракан Волхов фронтĕнчи вăйсен пĕр пайĕ пурнăçа кĕртнĕ. Икĕ фронтăн çапăçăвĕсене Верховнăй Главнокомандовани Ставкин представителĕсем Совет Союзĕн маршалĕсем Г. К. ЖУКОВ юлташпа К. Е. ВОРОШИЛОВ юлташ çыхăнтарса пынă.

Çапăçусенче генерал-лейтенант В. З. РОМАНОВСКИЙ юлташăн тата генерал-майор М. П. ДУХАНОВ юлташăн войскисем уйрăмах палăрнă.

II.

Пирĕн войскăсем кăнтăрта Каменск ятлă чугунçул станцине, Дивное, Черкесск хулисене, Каменка ятлă чугунçул станцине йышăнни

Кăнтăр-хĕвеланăç фрончĕн войскисем Çурçĕр Донец юханшывĕ урлă каçнă та КАМЕНСК ятлă чугунçул станцине йышăнса илнĕ, КАМЕНСК хулинче çапăçусем туса пыраççĕ.

Кăнтăр фрончĕн войскисем Маныч юханшывĕ урлă каçса ДИВНОЕ хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

Воронеж фрончĕн войскисем итальянецсен 4-мĕш корпусне çĕмĕрсе тăкнă та КАМЕНКА ятлă чугунçул станцине йышăннă. ОСТРОГОЖСК хулине пирĕн войскăсем хупăрласа илнĕ.

Воронеж фрончĕн районĕнче тыткăна илнисен хисепĕ январĕн 18-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле 31.000 салтакпа офицера çити ӳснĕ, вĕсенчен 22.000 çын венгерсем, 7.000 çын итальянецсем тата 2.000 çын ытла нимĕçсем.

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем ЧЕРКЕССК хулине йышăнса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЛЕНИН КУНĔСЕМУМĔН

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче, предприятисенче тата учреждениссенче В. И. Ленин вилнĕренпе 19 çул тултарнă куна паллă тума хатĕрленеççĕ. Çак кунсенче районри агитаторсемпе докладчиксен, пуçламĕш парторганизаци секретарĕсен тата агитколлектив руководителĕсен инструктивлă канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Паян предприятисемпе колхозсенче тата учреждениссенче агитаторсемпе докладчиксем Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсемпе калаçусем ирттерме тытăнаççĕ.

Совет Информаци Бюровěнчен

Январěн 17-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Январěн 17-мěшěнче пирěн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн **Миллерово** хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнě.

Воронежран кăнтăраллараххра наступлени туса пыракан пирěн войскăсем **Алексеевка** хулипе пысăк чугунçул станцине, **Коротояк** хулине тата **Подгорное** ятлă район центрěпе чугунçул станцине тытса илнě.

Çурçěр Донец районěнче пирěн войскăсем халăх пурăнакан темиçе вуншар пункта, çав шутра **Красновка, Исаевка, Верхне-Митякинский, Астахов, Калитвенская** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Погорелово, Красновка** ятлă чугунçул станцийěсене тытса илнě.

Орловская районěнче пирěн войскăсем **Буденновская, Бекетный, Донской, Ногаевско-Ребричанский, Гундоров, Романов** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене, **Эльмут** тата **Восточный** ятлă чугунçул станцийěсене тытса илнě.

Çурçěр Кавказра пирěн войскăсем татăклăн атакăласа **Курсавка** ятлă район центрěпе пысăк чугунçул станцине, **Гофицкое** ятлă район центрне, **Сергиевка, Султанское, Крым-Гиреевское, Воровсколесская** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Крым-Гиреево** ятлă чугунçул станцине тытса илнě.

Иртнě эрнере, январěн 10-мěшěнче 16-мěшě хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромěсем çинче нимěçсен 265 самолетне пěтерсе тăкнă. Çак вăхăтрах пирěн 133 самолет пěтнě.

* * *

Январěн 16-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 15 танкне тата грузсемпе войскăсем турттарса пыракан 50 автомашинине пěтерсе тăкнă е сиенленě. Артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпěнтерсе янă, противникăн пехотине пěр батальона çити сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районěнче пирěн войскăсем нимěçсен çавăрса илнě фашистла войскисене пěтерсе пынă. Совет чаçěсем йěри-тавра хěссе пырса малалла куçнă. Сталинградран хěвеланăçнерехри пирěн боецсем, нимěç пехотин уйрăм групписсем хирěç тăнине сирсе ярса, малалла куçса пынă. Питомникран çурçěреллерехри аэродромшăн вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Нимěçсем пирěн войскăсене тытса чарма хăтланнă, анчах та пирěн боецсем вăйлă атакăласа çав аэродрома кěрсе кайнă та блиндажсенче ларакан гитлеровецсене пěтерсе тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнě.

* * *

Орловская районěнче пирěн войскăсем, противник вăйлăн хирěç тăнине сирсе ярса, малалла наступлени туса пынă. Совет чаçěсем малалла кайса противникăн флангěсене пырса тухаççě те унăн подразделенийěсене пěр-пěринчен уйăрса илеççě, унтан вара вěсене кашнине уйрăмăн пыра-пыра çапаççě. Н-ски соединенин чаçěсем пěр кун хушшинче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Пěр участокра пирěн танкистсем тăшманăн батальонне çапса аркатнă, нимěçсен 400 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Пěр танк, 9 противотанковăй оруди, 23 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнě. Тыткăна илнисем те пур.

* * *

Воронежран кăнтăраллараххра пирěн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан вуншар пунктсене йышăнса илнě. Пěр участокра нимěçсен моторизованнăй полкне аркатса тăкнă, 17 танкне тата 8 бронемашинине пěтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнě, трофейăсем хушшинче 15 оруди тата çар пурлăхěн 2 склачě пур. Тепěр участокра совет боецěсем халăх пурăнакан пысăк пунктра тăшманăн гарнизонě хирěç тăнине сирсе янă, бронемашина, 13 оруди, 40 пулемет, 46 автомашина тата горючи складне тытса илнě. Противникăн 300 салтакěпе офицерне ытла тыткăна илнě.

* * *

Великие Луки хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехри районра пирěн чаçсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă. Н-ски чаçăн боецěсем, тăшман хирěç тăнине сирсе ярса, унăн вăйлă тěреклетнě вичě опорнăй пунктне тытса илнě. Çапăçу хирěнче тăшманăн çěршер вилли выртса юлнă. Нимěçсен 400 салтакěпе офицерне ытла тыткăна илнě. Трофейăсем тытса илнě, трофейăсем хушшинче 9 танк, 3 бронемашина, ултă кěпçеллě 3 миномет, пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем тата ытти тěрлě çар пурлăхěсем пур.

* * *

Çурçěр Кавказра пирěн войскăсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Пěр участокра совет войскисене малалла кайма чарас тесе, гитлеровецсем контратакăна пехотăн икě батальонне тата 20 танк кěртсе янă. Артиллерипе бронебойщиксем нимěçсен 7 танкěпе 11 автомашинине персе çěмěрнě е çунтарса янă. Хаяр çапăçура пирěн подразделенисем 400 гитлеровеца çити пěтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан тепěр пункт районěнче боеприпассен 3 складне, 27 автомашинăна, 2 радиостанцие тата тумтирсемпе продовольстви нумай тытса илнě.

* * *

Украинăри партизансен Сумы облаçěнче кěрешекен отрячě темиçе ăнăçлă операци туса ирттернě. Противникăн халăх пурăнакан пысăк пунктри гарнизонне тапăнса, партизансем 60 нимěç салтакне пěтерсе тăкнă, полици начальникне, старостăна тата 21 полицейскине вěлернě. Çав отрядри партизансен ушкăнě противникăн пěр паха чугунçулě çинчи кěпере сирпěнтерсе янă.

Январěн 18-мěшěнчи ирхи пěлтерÿ

Январěн 18-мěшě ыран тенě чух çěрле пирěн войскăсем **Сталинград** районěнче, **Воронежран** кăнтăрарахра, **Çурçěр-Кавказра, Донăн** анатри районěнче тата **Çурçěр-Донец** районěнче малтанхи енлеллех çапăçса пынă.

* * *

Сталинград районěнче пирěн войскăсем нимěçсен çавăрса илнě фашистла войскисене пěтерсе пынă. Н-ски соединенин чаçěсем противник хирěç тăнине çěнтерсе пырса, малалла куçнă. Çапăçура 1.000 гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Нимěçсен 850 салтакěпе офицерне тыткăна илнě. Трофейăсем тытса илнě, вăл шутра: 20 самолет, 38 танк, 91 оруди, ултă кěпçеллě 14 миномет, 1.000 ытла винтовкăпа автомат, 93 пулемет, 20 пин снаряд, 21 радиостанци тата ытти çар пурлăхěсем те пур.

* * *

Воронежран кăнтăраллараххра пирěн войскăсем, наступлени малалла аталантарса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнě. Противникăн вăйлă çирěплетнě пункчěнче пěр çапăçура Хорошилов юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем противник гарнизонне пěтěмпех тенě пекех вěлерсе пěтернě. Халăх пурăнакан пěр пысăк пункта йышăнса, пирěн чаçсем нимěçсен 1.255 салтакěпе офицерне тыткăна илнě, вăл шутра пěр полковник пур.

* * *

Çурçěр-Донец районěнче пирěн войскăсем ăнăçлăн наступленипе çапăçусем туса пынă. Пěр чаçě тăкра совет боецěсем, хăвăртăн пырса çапса, нимěçсене халăх пурăнакан пěр пысăк пунктран хěссе кăларнă. Нимěçсен пехотине пěр батальона çити вěлерсе пěтернě, çичě танка çěмěрнě тата çунтарса янă, 20 оруди пěтерсе тăкнă, 300 çына тыткăна илнě. Çакăн пек трофейăсем: 2 танк, 20 оруди, 50 автомашина тата тěрлě çар снаряженийě хунă икě склад тытса илнě.

* * *

Çурçěр Кавказра совет чаçěсем халăх пурăнакан темиçе пункта тата 2 чугунçул станцине йышăнса илнě. Халăх пурăнакан пěр пысăк пунктăн хěвеланăç хěрринче хаяр çапăçусем пыраççě. Тăшманăн позицийěсем çине артиллерирен хăватлăн персе хатěрленнě хыççăн, пирěн боецсем, нимěçсен инженерла укрепленийěсемпе минăсем хурса тухнă вырăнěсем урлă каçса, нимěçсем хирěç тăнине çěнтерсе, [illegible] 450 гитлеровеца пěтерсе тăкнă, 5 танка, 13 автомашинăна çěмěрнě [illegible]. Трофейăсем хушшинче 15 оруди, 2 склад пур. Тепěр участокра гвардеец-кавалеристсем [illegible] тăшман пехотин ротине сапаласа янă, пěр танка пěтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçěнче кěрешекен партизансен отрячě противникăн çар эшелонне [illegible] сирпěнтерсе янă. Крушение пулнă чухне 8 цистерна çунса кайнă, 13 платформа тата 13 груз вагонě [illegible]. Тепěр отрядри партизансен группи [illegible] чугунçула сирпěнтерсе янă, çавăн пекех тата телеграфпа телефон [illegible] 1.000 метр таршшě касса татнă.

* * *

Совет войскисем Великие Луки хулине йышăнса илни гитлеровецсене [illegible] пěлтерне: «Нимěç танкěсен пысăк соединенийěсем Великие Луки хули патне татса кěме пултарчěç», çапла вара «Великие Луки хулин гарнизонě çынсемпе хěçпăшал тěлěшěнчен чылай пысăк пулăшу илчě», тенě.

Çав ухмахла суя халлапсене Берлинра шухăшласа кăларнă вăхăтра, Германи командованийě Великие Луки хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре тата çурçěр-хěвеланăçнерехре ударнăй группировка пухса тăратнă, çапла вара хулана çěнěрен тытса илме пěтěм вăйне хурса хăтланса пăхнă. Нимěçсен шухăшě çăмăл пулнă: Совет войскисем Великие Луки хулине тытса илнине кунран-кунах çине тăрса пытарса пымалла, çав вăхăтрах вара, нимěнле жертвăсене те пăхса тăмасăр, хула патне çěмěрсе кěмелле те ăна йышăнса илмелле. Çапла гитлеровецсем пěрре персех икě мулкача вěлерме шутланă: пěрремěшěнчен, питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан хулана çěнěрен тытса илмелле, иккěмěшěнчен, хăйсен йăлтах путланса ларнă репутацине тÿрлетмелле.

Вăйсем пухса тăратса, нимěçсем Великие Луки хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре тата çурçěр-хěвеланăçнерехре хаяр контратакăсем тунă. Анчах та, совет командованийě нимěçсен планне вăхăтра сиссе илнě, кирлě мерăсене вăхăтра йышăннă. Пирěн войскăсем таттисыпписěр пыра-пыра çапса, противника халран яна тата ăна питех те пысăк сиен кÿнě. Нимěçсен наступленийě хăйсен юнě ăшне путса ларчě. Нимěçсен группировки хăй лартнă тěллеве ниепле те пурнăçа кěртеймерě, Великие Луки 1943 çулхи январěн 1-мěшěнчен пуçласа советсен аллинче пулнă тата халě те советсен аллинчех тăрать. Çапла, Гитлерăн тепěр авантюри [illegible]

Хěрлě Çар 25 çул тултарнă куна ремонт туса пěтернипе кěтсе илетпěр

ИШЛЕЙ, январěн 18-мěшě. (**Телефонпа**). Çулталăкри план тăрăх пирěн МТС кăçал çуракине 57 трактор юсаса кăлармалла. Вăл шутран 19 трактора капитальнăй, 24-шне текущи ремонт тумалла тата 10 трактора техника тěлěшěнчен пăхса тухса ěçе хатěр тумалла.

Паянхи куна МТС пурě 38 трактора юсаса çитерне. Вăл шутран 14 трактора капитальнăй, 14 трактора текущи ремонт тунă, 10 трактора техника енчен пăхса тухса ěçе тухма хатěрлесе лартнă.

МТС-ăн вичě бригади ремонт тумалли плансене 1942 çулăн IV-мěш кварталěнчех пурнăçларěç. Иртнě вунă кун хушшинче МТС-ăн иккěмěш номерлě бригади пысăк çěкленÿпе ěçлерě. Трактористсем, машина пайěсене юсакан рабочисем çěрне-кунне пěлмесěр ěçлеççě. Тракторсене хăвăртрах юсаса ěçе тухма хатěр тăвас тесе вěсем кану кунěсенче те ěçлерěç. Çапла, паянхи куна иккěмěш бригада та (бригадирě Афанасьев юлташ) тракторсене юсамалли плана тултарчě, пур тракторсене те, ялхуçалăх машинисене те, пěтěмěшпех юсаса лартрě.

МТС-ăн ытти бригадисем те хăйсен пěтěм пултарулăхне ěçе хураççě. Тракторсене пурне те февралěн 1-мěшě тěлне юсаса лартма хăйсем çине илнě обязательствăна вěсем куллен пурнăçласа пыраççě. Мазяров, Зайцев юлташсем ертсе пыракан 14-мěшпе 11-мěш номерлě бригадăсем те ремонт ěçне ыран-паянах пěтěмěшпех вěçлеççě.

МТС-ăн старши механикě Кириллов юлташ ертсе пынипе механически цехра станоксен ěç пултарулăхне хăпартнă. Тěслěхрен, СТЗ тракторсем валли гильзăсем çěнетсе тăвакан станокăн çавăрăну хăвăртлăхне ÿстернě. Çапла тунипе станокăн ěç пултарулăхě çěр процента яхăн ÿснě тата гильзăсене те лайăхрах тума май пулса тăнă. Çапла халě пирěн механически цех гильзăсем хамăра валли çеç мар, Элěкпе Сěнтěр МТС-ěсем валли те тума пултарать.

Хěрлě Çар 25 çул тултарнă уяв çывăхарса килет. Пирěн МТС вăл чаплă уява пур тракторсемпе ялхуçалăх машинисене те çирěп юсаса лартнипе, ремонт ěçне пěтěмěшпех вěçленипе, 1943 çулхи çуракине тухма пур енчен те хатěр пулнипе паллă тăвать. Çакăншăн халь пирěн коллективри кашни çын куллен. вăя шеллемесěр ěçлет.

П. ВАСИЛЬЕВ,
МТС директорě.

51 трактор çуракине тухма хатěр

ЕЛЧĚК, январěн 18-мěшě. (**Телефонпа**). Машинно-тракторнăй станци 51 трактора юсаса лартнă. Паянхи куна пурě 10 бригада ремонт тумалли çулталăк планне пěтěмěшпех пурнăçланă. Вěсем тракторсене çеç мар, ялхуçалăх машинисене те пěтěмěшпех юсаса лартнă. Çапла, январěн 15-мěшě тěлне МТС капитальнăй ремонт тумалли çулталăкри плана 90 процент, текущи ремонт тумалли çулталăкри плана 77 процент тултарчě тата 33 плуг, 6 лущильник, 25 культиватор, 12 сеялка юсаса лартрě. Кунсăр пуçне 1942 çулăн IV-мěш кварталěнче трактористсемпе ремонт тăвакан рабочисем хăйсен пуçарăвěпе 6 комбайн валли моторсем юсарěç.

Халě тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ěçе пěтěмěшпех вěçленě бригадăсем пурте комбайнсене юсас ěçе куçнă. Тракторсен, машинăсен пайěсене юсакан тата çěнěрен тăвакан рабочисен кунран кун лайăхрах та нумайрах ěçлес хастарлăхě ÿссе пырать. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ěçе вěсем Хěрлě Çар 25 çул тултарнă кун тěлне пěтěмěшпех вěçлессишěн кěрешеççě. МТС коллективě кăçал ремонт тумалли мěнпур ěçе мартăн 15-мěшě тěлне вěçлеме обязательство илчě. Илнě обязательствăсене кашни бригада кулленех пурнăçласа пырать. Бригадăсенче социализмлă ăмăрту юлашки вăхăтра тата анлăрах саралчě.

Çавăн пекех пирěн МТС-ăн механически цехě машинăсен запаслă пайěсене юсаса çěнетес тата çěнěрен тăвас ěçе те хăвăрт туса пырать. 1942 çулăн IV-мěш кварталěнче цех машинăсемпе тракторсен запаслă пайěсене пурě 24 пин тенкěлěх юсаса çěнетрě, 15 пин тенкěлěх çěнěрен турě.

Г. МИХЕЕВ,
Елчěк МТС политотделěн начальникě.

Вулав çурчěсен ěçěсне хакламан çěрте

Шăхасан районěнче 23 вулав çурчě тата 13 клуб шутланать. Хут çине пăхсан, вěсен пуçлăхěсем те пурри палăрать. Районри çутěç пайě ку ěçе учительсене явăçтарма тытăннă, 17 учителе избач пулса ěçлеме уйăрнă.

Анчах, калас пулать, çынсене уйăрса, хут çине çырса хунинчен ытла ěç малалла каяйман.

Çěнěрен уйăрнă избачсене çулларанпа та пухса каламан. Çавăнпа вěсенчен нумайěшě ěçе мěнрен тытăнмаллине те лайăхах пěлмеççě.

Избачсен политикăллă пěлěвне тата культурлăхне ÿстерес тěлěшпе ВКП(б) райкомě нимěн те туман. Семинарсем ирттерессине организацилемен. Шăхасан районěнче, ВКП(б) райкомěн секретарě Кузьмин юлташран пуçласа ялсовет исполкомěсен хăшпěр председателěсем таранах, вулав çурчěсен ěçне хакламанни курăнать.

Çавăнпа вара, районри вулав çурчěсен ěçěсем çинчен 1942 çулта 3 решени йышăннă пулин те, ěçě вырăнтан тапранман. Районра пěр вулав çурчě те йěркеллě ěçлемест. Сителпе Малти Антавăшри вулав çурчěсем пачах хупăнса ларнă. Шуркасси ялсовет исполкомěн председателě коммунист Александров юлташ вулав çуртне сутса янă. Сурăмра тата Энтриялěнче вулав çурчěсене куçса килнě çынсене хваттере янă. Хурамалти вулав çуртне çěрулми вăрлăхě хунă.

Райсовет исполкомě районри вулав çурчěсемпе клубсене вутă тата краççин тупса парас тěлěшпе сахал интересленет. Çавăнпах ěнтě Мамеевăри, Атнашри, Энтриялěнчи вулав çурчěсем вутăсăр ларяççě.

1942 çулта бюджет тăрăх вулав çурчěсем валли 66.600 тенкě укçа уйăрнă. Вăл шутран 30 процентне кăна усă курнă.

Парти, совет организацийěсем политикăллă çутěç учрежденийěсен ěçěсене хакламан пирки, районри вулав çурчěсем ěçлемеççě.

Киров ячěпе тăракан колхозра клуб колхоз правленипе тата ялсовет исполкомěпе пěр çурта вырнаçнă. Клуб валли уйăрнă пÿлěм питех те аван. Клубăн библиотеки пуян. Унта темиçе çěр кěнеке. Çапах та çав клуб май уйăхěнчен варах çăрапа питěрěнсе тăрать. Унта никам та кěрсе курмасть, мěншěн тесен ăна хутмаççě. Унта йěрке çук, таса мар. Кантăксем ванса пěтнě. [illegible] ларман. Портретсене, плакатсене йěркесěр, чалăш-чăлăш çаккаласа тухнă. Январěн 10-мěшěнче «Да здравствует 1-ое мая», «Колхозники и колхозницы, боритесь за завершение весеннего сева» текен лозунгсем çакăнса тăраççě. Çакна та каламалла: темшěн вара вулав çурчěсенче, клубсенче, колхоз правленисенче лозунгсене вырăсла çыраççě. Чăвашла çырсан пурне те ăнланмалла пулěччě.

Ку колхозра парти, комсомол организацийěсем пур. Вěсен секретарěсем пулса Степановăпа Никитин юлташсем ěçлеççě. Анчах вěсем вулав çурчěн ěçне чěртсе ярас ыйтăва хăйсен пухăвěсенче пěрре те сÿтсе-явман.

Ямашри, Ново-Мамеевăри тата ытти вулав çурчěсенче ку таранччен те совет организацилемен. Ěç планě çук. Стена хаçачěсем тухмаççě. Тěрлěрен уголоксем, витринăсем, выставкăсем туман. Ěçри показательсене кăтартакан хăма çук. Колхозниксен ыйтăвěсем çине ответ парас тěлěшпе справочниксем йěркелемен. Ěççыннисене кашни кунах вăрçă фрончěсенчи ěçсемпе тата тěнчери лару-тăрупа паллаштарас ěç те пулса пымасть.

Район центрěнче соцкультура çурчě пур. Чăннипе, ку çурт ялсенчи избачсене вěрентсе, пулăшса пымалла пек туйăнать. Кунта хăйěнче те йěрке сахал. Октябрь уйăхěнчех соцкультура çурчěн советне çирěплетнě. Çирěплетнипех ěçě те пěтнě. Совет членěсем ку таранччен те пухăнса канашламан, ěç планě туман. Уйрăм членěсене ěç уйăрса паман. Пÿлěмсенче таса мар.

Соцкультура çурчěн директорě пулса Шурукова юлташ ěçлет. Вăлах библиотекарь тата районри библиотекăн заведующийě. Çавăнпах пулас, соцкультура çурчěн ěçне лайăхлатас тěлěшпе сахалтарах ěçлет. Культурник пулса ěçлеме «Красный Октябрь» колхозăн ферма заведующине Григорьева юлташа уйăрнă. Анчах вăл çынсемпе пěрле пырса хаçат вуланисěр е спектакль курнисěр пуçне нимěн те тумасть.

Партин, советăн Шăхасан районěнчи организацисен районри политикăллă çутěçне лайăхлатас тěлěшпе пěтěм вăя хурса ěçлемелле. Вулав çурчěсем, клубсем хуçалăхлă-политикăллă задачăсене пурнăçлас ěçре чи çывăх помощник пулса тăнине ăнланмалла.

[illegible]

„Сталинградшăн çапăçни вырăссен чи чаплă çěнтерěвě пулса тăчě"

Англи хаçачěсем совет войскисен чаплă çěнтерěвěсем çинчен

ЛОНДОН, январěн 17-мěшě. (ТАСС). Совет войскисен çапăçури ăнăçăвěсем çинчен Англире тухакан хаçатсем çаплах нумай çыраççě. Хаçатсем пуринчен ытла Хěрлě Çарăн чаçěсем Воронежран кăнтăраллараххра наступлени туни тата Сталинград районěнче çавăрса илнě нимěçсен фашистла войскисене пěтерсе тăкас тěлěшпе пыракан операцисем питě паха пулса тăни çинчен çыраççě.

Англин информаци министерствин пěлтерěвěнче çапла каланă: Гитлер—эпир Сталинграда илетпěрех, нимěçсен çавна ěненмелле, тенěччě. Çак сăмах пушă сăмах пулса тăни халь паллă ěнтě.

Темиçе уйăх хушшинче Германин атакисем Сталинград тěреклěхне пырса çапăнса çěмěрěлсе пычěç. Нимěçсем Сталинграда тытса илеймерěç. Унтан хулана хÿтěлекенсем хăйсем тапăнса пыма тытăнчěç те, тăшманăн 22 дивизийě ункă ăшне кěрсе ÿкрěç, вěсен кунçулě çинчен ыйту татăлнă ěнтě. Сталинград патěнче пулнă ěç вăл Германи армийě питех те пысăк поражени тÿсни çеç мар, вăл Гитлер хăй тÿснě поражени те пулса тăрать, Гитлер вăл Германин хěçпăшаллă вăйěсене ертсе пырас ěçе тата Сталинград хулине тытса илес ответлăха хăй çине илнě. 1942 çулта Германи пыра-пыра çапнин пěтěм йывăрлăхě Сталинград çине ÿкрě. Вăйлăрах хěсме мěн кирлě, ăна Сталинград патне янăччě. Сталинград патěнче поражени тÿсни Гитлерăн ятне варалать. Сталинградшăн çапăçни вырăссен чи чаплă çěнтерěвě пулса тăрать.

Рейтер агентствин вăрçă обозревателě çакна палăртса парать: Сталинград патěнче нимěçсем гитлерла çар хăçан та пулсан тÿснě чи пысăк катастрофăна тÿсрěç. Икě уйăх каялла кăна-ха Сталинграда нимěçсем хупăрласа тăратчěç. Сталинград вăл вырăс халăхě захватчика хастарлăн хирěç тăнине кăтартакан çап-çутă, ялтăртатса тăракан паллă пулса тăчě. Халě ěнтě Гитлерăн чи лайăх 22 дивизийěн Сталинград патěнчи юрпа витěннě çеçенхирсенче пěтмелле пулса тăрать. Гитлерăн ятне халама çук хытă пырса çапрěç.

Обозреватель тата Хěрлě Çар Воронежран кăнтăраллараххра наступлени тунине пысăк хак парать. Вăл çав участокра тунă çитěнÿсене питě чаплă çитěнÿсем тесе ят парать.

«Обсервер» хаçат хăйěн умстатьинче Хěрлě Çарăн çěнě çитěнěвěсем çинчен çапла çырать: «Россия историре пулнă мěнпур вăрçă кампанийěсенчен те пысăкрах кампание пурнăçласа пырать. Вырăссем противника питех те вăйлăн хěссе пыраççě, пěрлешнě нацисенчен пěри те халиччен апла хěссе пырайманнччě-ха».

Çав хаçатрах вăрçă обозревателěн Либерейторăн статьине пичетленě. Унта Либерейтор çапла çырать: Совет войскисем контрнаступлени туни тăшманшăн питех те сиенлě пулса тăчě. Хěрлě Çарăн руководстви çав контрнаступленине нимěçсем малалла куçса пынă вăхăтрах хатěрлесе пынă. Паллах ěнтě, тесе çырать обозреватель, çакă вăл питě пысăк стратегиллě планăн тěслěхě пулса тăрать. Çар специалисчěсем çав плана нумайччен вěренěç.

«Таймс» хаçат çапла çырать: Хěрлě Çар тăвакан наступлени Российăн тусěсемпе союзникěсене хěпěртеттерет, вăл унăн тăшманěсене хăратса чěтрене ертет. Хěрлě Çар кěрешекен районри çутçанталăкăн йывăр условийěсем пек условисенче пысăк соединенисем тăвакан çав тери анлă операцисем вăрçăсен историйěнче урăх тупăнěç-ши вара? Вырăссем вěсем, тесе çырать хаçат, хăйсем хăçан тата ăçта пырса çапас тенě, çавăнта тата çавăн чухне пырса çапаççě. Çавăн пек пырса çапнисем халиччен пěри те тăшмана сиен кÿмесěр иртмен-ха. Çавăнпа та совет войскисем халь тăвакан наступлени пěлтěрхи хěллехи наступленирен нумай пысăкрах результатсем парě тесе шанса тăма пулать.

АНГЛИ АВИАЦИЙĚ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январěн 17-мěшě. (ТАСС). Официальнăй йěркепе пěлтернě тăрăх, январěн 17-мěшě ыран тенě чух çěрле Англи бомбардировщикěсем Берлина вěçсе пырса тапăннă. Хула çине вут хыптаракан бомбăсем тата фугаснăй шултăра бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тивнипе хулара вăйлă пушарсем тухнине палăртнă.

Пысăк хастарлăхпа вěренеççě

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Çамрăксене çар ěçне вěрентес ěçе Хирти Мăнтăрти вěренÿ пункчě хěрÿллěн тытăннě. Пункт начальникě Г. Крылов тата отделени командирě Н. Слесарев юлташсем хăйсен ěçне кирлě пек туса пыраççě. Вěсем вěрентекен боецсем çав вěренÿ хăйсене мěнпе кирлине тата вăл халăхи вăхăтра мěнле пулас [illegible] ăнланса илнě. 32 вěренекен боецран 27-ше комсомолец, вěсенчен нумайěшě отличнo вěренсе пыраççě. Уйрăмăнах Будённый ячěпе тăракан колхоз çамрăкěсем—комсомолецсем И. Митрофанов, П. Федотов, Г. Бойков, И. Митрофанов юлташсем вěренÿре паха кăтартусем кăтартаççě.

Пункт çумěнче эрнере пěрер тух боевой листок тата «Отличник всевобуча» ятлă стена хаçачě тухаççě. Вěсем çинче вěренекенсем галли усăллă статьясем тата çавăсем те курма пулать. Хаçат боецсене фронтсенчи ăнăçулла операцисем çинчен [illegible] калать.

Нумаях пулмасть вěренекен боецсем хушшинче Хěрлě Çар валли танксем тума укçа пухасси пуçланнă. Кунта пухăннă укçа [illegible] пыраççě.

Г. Крылов юлташ вěренÿ вěçленичен те тěне боецсене пурне те отличниксем тăвассишěн тăрăшса ěçлет. Вăл пěтěм 200 çына çар ěçне вěрентсе хатěрленě, вěсенчен нумайěшě Хěрлě Çар фронта паттăррăн [illegible] кěрешеççě.

И. МИТЯСЬ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. [illegible], 6. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 8-47, редакци секретарăн — 4-28, [illegible] — 3-10, [illegible] — 8-21, [illegible] — 8-20.

Типография №, Управление полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 84 п.

НТ 028